# ТĂВАН СĂМАХ

Ялта чухне куллен хире тухаттăм,
Еçлеттĕм савăк юрă çеммипе.
Каç-каç вара çĕр çĕмĕрсе ташлаттăм
Вăййа иленнĕ тантăшăмсемпе.

Çуралнă килĕм, инçете эс юлтăн,
Эс — хурçă пуйăс шавĕ хыçĕнче.
Халь сан сăну — ялтан килен шур хутăн
Чуна вăй-хал кӳрен йĕркисенче.

Салам, çут çăлтăрлă, хастарлă халăх!
Эс манăçа хăвартăн тунсăха:
Салтакăн ĕçĕ — писĕ хул ырмалăх,
Салтак кулли — ăш выртмалла паха.

Анчах та ман ентешсене тупасчĕ,
Атте-анне чĕлхипеле, хĕрсе,
Çăвар туллин, техемлĕн калаçасчĕ
Пуплев кĕввийĕн юхăмне кĕрсе.

Вырăс чĕлхи, паллах, вун хут ятуллă,
Тăван сăмах — чĕрешĕн çывăхрах.
Эп унсăр — тип кӳлленчĕкри чĕр пулă,
Эп унсăр хама хам туяп чăлах.

Пĕрре чăваш юрри — ман хĕнĕм-тертĕм —
Янрарĕ кайрĕ каннă вăхăтра.

Аслисене пӗлтертӗм те — вӗҫтертӗм
Ҫитсе те тӑтӑм темӗн самантра.

Уҫланкӑра ай-хай шӑрантараҫҫӗ,
«Ан, авӑн, шӗшкӗ» тыткӑнлать чуна.
Унтан хӑйсемпеле паллаштараҫҫӗ
Йӗркипеле ҫӗнӗ туссем мана.

Хастарлӑх паллисем ҫиҫсе тӑраҫҫӗ
Патвар та анлӑ кӑкӑрсем ҫинче.
Пӗлетӗп: чӑвашсем ята ямаҫҫӗ
Кунта, ҫӗр тӗрлӗ халӑх хушшинче.

Вӗсен кашни ыр сӑмахне ҫӑтатӑп,
Ман, ҫамрӑккин, вӗренмелли нумай.
Эп хамшӑн ҫывӑх сӑнсене куратӑп
Чӗлхем сулмаклӑхне шайланӑ май.

Ун чух епле хӑпартланса каласрӑм
Ҫӗршыв ҫинчен, салтак шӑпи ҫинчен,
Кайӑк пулса пин-пин хир урлӑ каҫрӑм,
Ҫӳрерӗм Турикас урамӗнче.

Тӑван сӑмахӑм!
Ҫепӗҫ эс, мӑнаҫлӑ,
Инҫе ҫӗрте — виҫ хут илемлӗрех.
Эс илтӗнсен, ҫав лупасайлӑ, лаҫлӑ
Йӑмраллӑ ял ялан манпа пӗрле.

Шур Шупашкар та умӑмрах,
Мускав та,
Умрах — ҫут Атӑл хумӗсен ҫилхи.
Эп сан чысна хӗҫпӑшалпа сыхлатӑп,
Ман ӗмӗт, шанчӑк, юрату чӗлхи.

1972

Сементер Ю. Ҫӗр ҫаврӑнать/ Юрий Семенов. - Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1974. – С. 34-35.